ЧР Президенчĕн Çырăвне сӳтсе яватпăр

# Вĕренекенсем те айккинче юлмаççĕ

***Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров республика Патшалăх Канашне янă Çыру никама та айккинче хăварма пултараймасть. Пирĕнтен кашнинех пырса тивет вăл. Асăннă Çыру пирки шкулсенче вĕренекенсем мĕн шутлаççĕ-ха, вĕсем умне мĕнле задачăсем кăларса тăратать вăл? Çакăн пирки пĕлтереççĕ Муркашри лицейра вĕренекенсем.***

**ВĂХĂТ ТАТА МАНĂН ÇЕМЬЕ**

Пирĕн Президент çынсемшĕн çăмăл мар çак кризис вăхăтĕнче аслисем, çамрăксем – пурин патне те Çырупа тухни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăннипех те хальхи вăхăтра хамăрăн пултарулăхпа туллин усă курма майсем çук мар. Пирĕнтен кашниех тĕрлĕрен çĕнĕ технологисемпе усă курса пысăкрах чикĕсене парăнтарассипе хамăрăн республикăна, çĕршыва пулăшма пултарать. Çав тĕллевпе хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тумалла кăна. Çĕнетĕвечи малтанах пуçламăш сыпăкра, тепĕр майлă каласан, хамăр килте тăвас пулать.

Пĕрремĕшĕнчен, шутласа пăхар-ха: пуласлăхра бомж евĕр çынсем кирлĕ-и? Ĕçсĕррисен те халĕ майсем çук мар. Сăмсана усмалла мар кăна. Ĕненес пулать хăв ура çине тăма пултарнине. Пĕчĕк бизнесра та вăйна тĕрĕслесе пăхма пултаратăн. Хăвна ята пĕчĕк ферма та уçма май çук-им вара? Мĕншĕн-ха унта путенесем усрас мар? Унăн çăмартинче тĕрлĕрен витаминсем темĕн чухлех. Кунта Япони тĕслĕхĕ курăмлă. Японири шкулсенче куллен ачасене сывлăха çирĕплетме, ăс-тăна аталантарма пĕрер путене çăмарти параççĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, çын вăл – çут çанталăкăн пĕр пайĕ. Çавăнпа та унăн çут çанталăкран вĕренес пулать. «Бионика» наука пур. Çын чылай енпе çут çанталăк умĕнче парăмра. «Çӳп-çапа ăçта хумалла-ха?» ыйту çине те çут çанталăкранах хурав тупма пулать. Çут çанталăк хăй хыççăн тасамарлăх хăвармасть вĕт-ха. Çӳп-çапа каймалли каяшсене сортласа хуçалăхра усă курма пулать: выльăхсене тăрантарма, парниксем тума т. ыт. те. Пирĕн çемьере 10 çула яхăн ĕнтĕ çак мелпе пурăнатпăр. Пахчара пластик кĕленчесенчен туса лартнă парник та пур.

Хĕвел çутипе усă курса электроэнергие перекетлессине илес пулсан тата? Меллĕ, çăмăл тата йӳнĕ! Пирĕн çемье паянхи вăхăтпа тан пырать тесе каланă пулăттăм.

Çутă пуласлăх сывă ăс-тăнпа ӳт-пӳллĕ çын аллинче кăна. Çавăнпа та пирĕн çемьере сигаретпа та, наркотиксемпе те, алкогольпе те туслă мар.

**Алена АЛЕКСЕЕВА.**
10 класс.

**ПИРĔН ТӲПЕ ТЕ ПУЛТĂР**

Пирĕн пуласлăх – пирĕн алăра. Çакна эпĕ республика Президенчĕн «Чăваш Ен: пуласлăхри тата пуласлăх валли» Çырăвне вуласа тухнă хыççăн çирĕплетсех калама пултаратăп. Вăл кашни çыннах пирĕн республика пуласлăхĕпе малашлăхĕ, ăна чеченлентерес тесен пирĕнтен кашнийĕнех мĕн тумалли пирки шухăшласа пăхма хистет.

Çырупа паллашнă хыççăн çакă шухăша ячĕ: республика пуласлăхĕшĕн пирĕн çемье мĕн тума пултарать-ха? Çемье урлă ача таврари пулăмсене ăнланма хăнăхать, умри проблемăсене татса пама вĕренет.

Ытларах вăхăта çын çемьере ирттерет. Ачан пурнăç йĕрки çине те ашшĕ-амăшĕ, çывăх çынсем пысăк витĕм кӳреççĕ. Çемье хутшăнăвĕсем çынсем хушшинчи хутшăнусен полигонĕ пекех.

Пĕрле пурăнни, пĕр пек хушамат, тăванлăх çыхăнăвĕсем вĕсем ăстăн çывăхлăхĕсĕр нимĕн те мар. Ăш кăмăллăх, илемлĕх тата чыслăх саккунĕсемпе килĕшӳллĕн хăвна тата ыттисене аталантарни – ку вăл пултарулăхăн хăйне евĕр тĕсĕ. Пĕр-пĕринпе хутшăнни, савăнăçне те, хуйхине те пĕрле пайлани, пĕр-пĕрне йывăрлăхра пулăшма тăрăшни – акă мĕн çитсе каймасть хăш чухне пире.

Эпĕ шухăшланă тăрăх, чи малтанах çемье членĕсем хушшинчи хутшăнусене тишкерсе хак панинчен тытăнмалла. Мĕншĕн тесен шăпах ĕнтĕ çемье патшалăхăн пуçламăш тытăмĕ пулса тăрать. Унта сывă микроклимат пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Аслисене хисеплеме пĕлнинчен ыттисене хисеплесси те тытăнать. Çавна вĕрентрĕç те мана пирĕн çемьере, çапла тума чĕнсе калать те хăйĕн Çырăвĕнче Н.В. Федоров Президент.

Пысăк пĕлтерĕшлĕ задача вăл – хальхи технологисене аталантарасси. Пĕтĕмпех вĕсем çынсен пурнăç шайне ӳстерсе пырассипе çыхăннă.

Юлашки çулсенче компьютер кашнин пурнăç йĕркине çирĕппĕн кĕрсе вырнаçрĕ. Интернетсăр хальхи пурнăç мĕнле пулассине ăнкарма та çук. Манăн 65 çулхи асанне те çур çул ĕнтĕ компьютерпа ĕçлеме хăнăхать. Интернет пире вĕренӳре, ĕçре пулăшать, унпа усă курса кирек епле материал та тупма май пур.

Çырура Президент экологи ыйтăвĕсене те хускатрĕ. Ку тема вара паянхи куншăн чăннипех те актуаллă. Пурте эпир тасалăхра пурăнасшăн вĕт-ха. Апла пулсан тасалăхпа тирпейлĕхшĕн те хамăрăнах тăрăшмалла. Çапла вĕрентеççĕ мана атте-анне те.

Сывă ӳт-пӳре – сывă ăс-тăн, теççĕ. Сывă çынсемсĕр патшалăх та сывă пулма пултараймасть.

Тата эпĕ тарăн та çирĕп пĕлӳ илни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă пулăттăм. Çавăн чухне кăна çын çĕршыва май пур таран ытларах усă кӳме пултарать. Эпир вара Çырура палăртнинчен пире пырса тивекен задачăсене пурнăça кĕртессишĕн çине тăрăпăр. Пирĕн пурнăç малашне татах лайăхрах пулма тивĕç, çапла пулĕ те. Унсăрăн эпир çĕр çинче мĕншĕн пурăнатпăр-ха?

**Е. АЛЕКСАНДРОВА.**
11 класс.

Конкурс

# Çĕнтерӳпе таврăнчĕç



***Мартăн 21-мĕшĕнче Муркашри искусство шкулĕн Москакассинчи филиалĕн «Калинка» тĕслĕх ташă ушкăнĕ (ертӳçи Ирина Петрова) Муркаш район чысне хӳтĕлеме инçе çула тухрĕ. Вĕсем тĕрлĕ халăхсем хушшинче ирттекен «Весенние выкрутасы» конкурсра хăйсен пултарулăхне кăтартма Хусан хулине çитсе килчĕç. Асăннă конкурса кăçал 10-мĕш хут ирттерчĕç. Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен 100 ташă ушкăнĕ хĕрӳ кĕрешӳре пулчĕ. Çак ушкăнсен конкурсĕ 3 куна тăсăлчĕ.***

***Пирĕн хĕрсем вара пĕрремĕш кунхинех сцена çине тухрĕç. 29 ташă ушкăнĕ пулчĕ çак кун пысăк сцена çинче. Москакасси хĕрĕсем чăваш тата тутар ташшисене пысăк шайра кăтартма пултарчĕç, 1-мĕш степеньлĕ диплома тивĕçрĕç.***

***Инçе çула тухма пулăшнăшăн «Стройка» ООО ертӳçине П.Т. Терентьева, «Сежина» ООО ертӳçине Н.Г. Прокопьевана, çĕнĕ çипуççем çĕлеме пулăшнăшăн искусство шкулĕн ертӳçине Г.М. Анисована, А.В. Смирнова çĕвĕçе пысăк тав сăмахĕ каласшăн. «Заря» ООО ертӳçи И.П. Терентьева та пысăк пулăшу кӳчĕ. Тавтапуç вĕсене пурне те.***

***Г. ГОЛУБЕВА.***

Обществăлла организацисенче

# Пархатарлă ĕç тăваççĕ

Паян тĕслĕхлĕ библиотекăсем ыттисенчен мĕнпе уйрăлса тăнине пĕлмен çын çук та пулĕ. Вĕсен шучĕ те республикăра ӳссех пырать. Çак вулавăшсене çӳрекен çынсене компьютера алла илме пулăшас ĕçе Муркашри тĕп библиотекăра та ăнăçлăн пуçăнчĕç. Нумаях пулмасть 2 уйăха тăсăлнă вĕренĕвĕн 1-мĕш ушкăнĕ ăнăçлă вĕренсе пĕтерни çинчен алла сертификатсем илчĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн Н. Федоровăн халăха компьютер пĕлĕвĕ парассипе йышăннă проектне пурнăçа кĕртсе пынă май, районта та ку тĕллевпе компьютерпа усă курма вĕренес текенсен 1-мĕш ушкăнĕ йĕркеленчĕ. Малтанах шиклĕрехчĕ те. Пире вĕрентекенсем Т. Волковапа И. Николаева сахал мар пулăшрĕç. Самана хăвăрт ырă енне улшăнса пырать. Пурнăçран юлас мар тесен, хамăрăн та мал туртăмлă пулмалла.

Çулталăк каяллах Муркашри куç курманнисен обществине компьютерсем парнелерĕç. РФ Пенси фончĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи уйрăмĕсем пире 5 компьютер таранах панăччĕ. Вĕсенчен 4-шне куç япăх куракан çамрăксене парнеленĕ. Вĕренӳре вĕсене килте компьютер пурри самай пулăшать.

Çак 2 уйăх хушшинче эпир çутта тухрăмăр темелле. Интернетпа усă курма, электронлă почтăпа çырусем яма, хамăра кăсăклантаракан ыйтусем çине хуравсем шырама вĕрентĕмĕр.

Пире, 40–50 çултан иртнисене, малтанах компьютера ăнланассăн та туйăнмастчĕ. Анчах та Татьяна Александровнапа Ирина Алексеевна самай пулăшрĕç. Вĕренӳ программи те юрăхлă. Вĕреннине çирĕплетме киле те заданисем парса яратчĕç.

Пирĕн алăра паян – компьютерпа ĕçлеме пĕлнине çирĕплетекен сертификат. Вăл пире пурне те хамăр ĕçре те, килте те, обществăра та пурнăçпа тан утма пулăшĕ. Чи кирли вара – эпир хамăр та мал ĕмĕтлĕх тупма, пĕрле пулса, çамрăк та ăста вĕрентекенсене ăнланма пултарни.



**Сире хисеплесе:**
**И. АНДРИЯНОВА,**
**С. АРСЕНТЬЕВА,**
**Ю. ГОРШКОВ,**
**Н. МИХАЙЛОВА,**
**Е. НИКИТИНА**
**вĕренекенсем.**

Официально

**Постановление Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики № 54/355-IV от 25 марта 2010 года**

## О возложении полномочий избирательных комиссий муниципальных образований, организующих выборы в органы местного самоуправления на территории Моргаушского района Чувашской Республики, на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию

В соответствии с пунктом 4 статьи 24 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», пунктом 4 статьи 12 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», на основании ходатайств депутатов Моргаушского района от 11 марта 2010 года, Собрания депутатов Александровского сельского поселения от 9 марта 2010 года, Собрания депутатов Большесундырского сельского поселения от 4 марта 2010 года, Собрания депутатов Ильинского сельского поселения от 9 марта 2010 года, Собрания депутатов Кадикасинского сельского поселения от 9 марта 2010 года, Собрания депутатов Моргаушского сельского поселения от 26 февраля 2010 года, Собрания депутатов Москакасинского сельского поселения от 5 марта 2010 года, Собрания депутатов Орининского сельского поселения от 6 марта 2010 года, Собрания депутатов Сятракасинского сельского поселения от 5 марта 2010 года, Собрания депутатов Тораевского сельского поселения от 5 марта 2010 года, Собрания депутатов Хорнойского сельского поселения от 5 марта 2010 года, Собрания депутатов Чуманкасинского сельского поселения от 6 марта 2010 года, Собрания депутатов Шатьмапосинского сельского поселения от 9 марта 2010 года, Собрания депутатов Юнгинского сельского поселения от 9 марта 2010 года, Собрания депутатов Юськасинского сельского поселения от 1 марта 2010 года, Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения от 9 марта 2010 года, Собрания депутатов Ярославского сельского поселения от 10 марта 2010 года, с целью обеспечения подготовки и проведения выборов в органы местного самоуправления в Моргаушском районе Чувашской Республики, Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики постановляет:

1. Возложить полномочия избирательной комиссии Моргаушского района на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
2. Возложить полномочия избирательной комиссии Александровского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
3. Возложить полномочия избирательной комиссии Большесундырского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
4. Возложить полномочия избирательной комиссии Ильинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
5. Возложить полномочия избирательной комиссии Кадикасинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
6. Возложить полномочия избирательной комиссии Моргаушского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
7. Возложить полномочия избирательной комиссии Москакасинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
8. Возложить полномочия избирательной комиссии Орининского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
9. Возложить полномочия избирательной комиссии Сятракасинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
10. Возложить полномочия избирательной комиссии Тораевского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
11. Возложить полномочия избирательной комиссии Хорнойского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
12. Возложить полномочия избирательной комиссии Чуманкасинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
13. Возложить полномочия избирательной комиссии Шатьмапосинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
14. Возложить полномочия избирательной комиссии Юнгинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
15. Возложить полномочия избирательной комиссии Юськасинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
16. Возложить полномочия избирательной комиссии Ярабайкасинского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
17. Возложить полномочия избирательной комиссии Ярославского сельского поселения на Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
18. Направить настоящее постановление в представительные органы муниципальных образований на территории Моргаушского района.
19. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

**Председатель Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики**
**Л.Н. ЛИНИК.**
**Секретарь Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики**
**Е.Б. ШЕВЛЯГИНА.**